к Положению «О вопросах налогового регулирования в Чебоксарском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»

**Таблица корректирующих коэффициентов базовой доходности оказания ветеринарных услуг**

| Ветеринарные услуги | Корректирующий коэффициент оказания ветеринарных услуг |
|---|---|
| Чебоксарский район | 0,22 |

**Пĕлме интереслĕ**

# МИÇЕ ÇУЛТА-ШИ ШУРĂ ШУПАШКАР?

**Кăçал август уйăхĕнче Чăваш Ен тĕп хули хăйне вырăс летопиçĕсенче пĕрремĕш хут асăнма пуçланăранпа 536 çул çитнине паллă турĕ. Анчах та ку хула çав çула çитнине пĕлтермест. Çав вăхăтра Шупашкар крепоçĕ пулнă ĕнтĕ. Çапах та миçе çулта-ха вăл?**

**Иртнĕ** ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсен вĕçĕнчех СССР Ăслăлăх академийĕн П.П.Ефименко тата П.Н.Третьяков ертсе пынă археологи экспедицийĕ хулан анат пайĕнче чавса пăхса çакнашкал пĕтĕмлетӳ патне пырса тухнă - Шупашкар вырăнĕнче хула евĕрлĕ хутлăх 13-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче пулса кайнă. 1969-1973 çулсенче Шупашкар ГЭСĕ вырăнĕнче СССР Ăслăлăх академийĕн Археологи институчĕн В.Каховский ертсе пынă археологи экспедицийĕ ĕçленĕ. Хулана никĕсленĕ вăхăта вăл пĕр ĕмĕр каярах куçарнă (12-13 ĕмĕр). Каярах В.Д.Димитриев, Европăн авалхи карттисене тишкерсе, Шупашкар вырăнĕнче çĕнĕ хутлăх 13-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче пулса кайнине палăртнă, хулана 1295 çулта йĕркеленĕ тесе саккунлă çирĕплетме сĕннĕ. 2005 çул пуçламăшĕнче Атăл тăрăхĕнчи вăтам ĕмĕрсенчи хуласен историйĕпе ĕçлекен паллă специалист В.Л. Егоров, 1969-1973 çулсенче чавса пăхнисене тишкернине тĕпе хурса, хулана 1255 çулта йĕркеленĕ тесе йышăнма сĕннĕ. Сумлă ăсчах çакнашкал пĕтĕмлетӳ тунă хыççăн республика общественноçĕ хулана йĕркеленĕренпе 750 çул çитнине савăнăçлă лару-тăрура паллă тумашкăн хатĕрленме пуçланă. Те хула çакнашкал событие уявлама хатĕр пулмарĕ, те ытти пысăк сăлтавсем пулчĕç - кăçал хула юбилейĕ пулаймарĕ. Уявламасăр тĕрĕс те турĕç пулĕ, мĕншĕн тесен хула тата та аслăрах пулнине çирĕплетекен çăл куçсем пур. Чи малтанах ку авалхи пăлхарсен «Гази-Барадж тарихы (1229-1246 гг.)» летопиçĕ, вăл Оренбург хулинче (1993-1997 çç.) авалхи пăлхар летопиçĕсен Иман Бахшин «Джагфар тарихы» пуххи пичетленсе тухнă хыççăн историксен пуянлăхĕ пулса тăчĕ. Унта Пăлхар патшалăхĕн тата унăн хулисен историйĕнчен, çав шутра Шупашкар хули çинчен те интереслĕ хыпар нумай.

**13-мĕш** ĕмĕр пуçламăшĕнче Чельби кан (пăлхарсем хăйсен патшисене çапла чĕннĕ) çумĕнче Атăлçи Пăлхарти хăш-пĕр провинцире, тĕпрен илсен, арсемпе чирмишсем (ку чухнехи марисен, удмуртсен, чăвашсен несĕлĕсем пурăннă вырăнсенче пăлхавсем пуçланнă, вĕсене «ар пăлхавĕ» тенĕ. Сăлтавĕ - çĕр ĕçлекенсенчен илекен ахаль те пысăк налука кĕтмен çĕртенех ӳстерни (икĕ хут). Çакна карачирмышсем (чирмыш-мăсăльман мар çынсем) уйрăмах туйнă, вĕсем чирмишмăсăльмансенчен (акчирмышсенчен) - 2 хут ытларах, субашсенчен (çăмăллăхсемпе усă куракан мăсăльмансенчен) 4 хут ытларах тӳленĕ. Пăлхавçăсем çумне тыткăнри тата тарса çӳрекен «уруссем» (вырăссем) хушăннă. 1203 çулта Мартюба провинцийĕнче те пăлхав пуçланнă, унта ку чухнехи чăвашсемпе марисен несĕлĕсем пурăннă. Влаçсен пăлхавçăсене пусарма курсыбай (пăлхарсен яланхи çарĕсем) тата флот яма тивнĕ. Мишарсем хастар пулăшнипе пăлхава тискеррĕн пусарнă. «Ун чухнех пăлханнă округсенче акчирмышсем валли (çырнине пĕр улăштармасăр илсе кăтартнă.- **А.Н.**) Кукджак, Чыбыксар, Сундэр, Алат, Урджум, Алабуга, Арча, Нуршада баликсем туса лартнă...» Пăлхарсем пысăках мар крепоçсемпе тĕрмесене баликсем тенĕ. Унтанпа кăштах улшăннă, çапах та кусем Кокшага (Кокшайск), Чебоксары, Сундырь, Алат, Уржум, Елабуга, Арск пулнине ăнланса илетĕн. Вĕсене хăçан йĕркеленине кăтартман, çапах та летопиç тексчĕ тăрăх илсен, ку 1204-1208 çулсенче пулнă. Ку вунă çуллăхра вĕсем 800 çул тултараççĕ. Улатăр хули тепĕр 23 çултан 1000 çул тултарнине паллă тума пултарать. Гази-Барадж каланă тăрăх, «Мартюба кĕпĕрнаттăрĕ Алай 1028 ç. Сурасу юхан шывĕ çинче балик йĕркеленĕ, ăна ун ячĕпе Алай Тура теме пуçланă».

**Летопиçре** пăлхарсен ытти хули çинчен те хыпарланисем пур. Уйрăммăн илсен, Хусан хулине кунта 1103 çулта йĕркеленĕ тенĕ. Акă мĕнлерех çутатса панă ку пулăма Гази-Барадж. 11-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче Атăлçи Пăлхар вырăс княжествисемпе Кисанпа (Рязань) тата Джирпа (Ростов) тытакан çыхăнусем кăткăсланнă, вĕсем кумансемпе (половец) пĕрлешнĕ. Çакăнпа хавхаланса вĕсем пăлхарсене «ростовщина» тӳлеме пăрахнă, çулсене хупласа лартнă, Кисан бекĕ вара Мартюбăна вирхĕнсе кĕрсе мишарсене çаратнă. Пăлхар патшалăхĕн çав вăхăтри канĕ Адгам хăйĕн эмирне Шамгун Шим-Саина вĕсенче йĕрке тума хушнă. Лешĕ часах Кисана çул тытнă, инкек тӳснĕ арсем пулăшнипе княжество çарне çапса аркатнă. Кисан бекĕ мирлешме ыйтнă, уншăн пысăк куланай тӳленĕ.

**Çав çулсенче** пăлхарсем вырăссене хирĕç Сĕве юхан шывĕ çинчи Дэбэр крепоçĕн витĕмĕпе усă курса çапăçнă (крепоç юлашкисем Тутарстан Республикин Апас районĕнчи хальхи Деушево ялĕ çывăхĕнче тесе шутлаççĕ). Анчах та кунтан Джира тапăнса пыма меллĕ пулман. «Çавăнпа эмир (малалла летопиç тексчĕ тăрăх илсе кăтартатăп.- **А.Н.**) Кисан çыннисем тапăннă хыççăн çак тĕллевпе Арсу çинче çĕнĕ хула тума хушнă. 1103 çулта хулана эмир куçĕ умĕнчех туса лартнă. Учель («Три Города» - е «Виç ял».- **А.Н.**) ят панă, мĕншĕн тесен вăл виçĕ пайран тăнă. Вĕсенчен иккĕшĕ Бығылтау тăвĕ çинче пулнă, вĕсене Югары Керман тата Калган тенĕ, виççĕмĕшĕ Акби-кюль кӳлли таврашĕнчи ту айĕнче вырнаçнă, ăна Акбикюль тенĕ. Калган Акбикюльпе пĕрлешнĕ, Югары Кермана Саин шăтăкĕ тата ту пайĕ уйăрса тăнă... Югары Керман сăртăн чи çӳлти пайĕнче вырнаçнипе ăна çапла каланă».

**Хусансем** çак паллăсем тăрăх хăйсен тăван хулине çăмăллăнах палласа илеççĕ. Югары Керман - ку вăл Хусан Кремлĕ, Арсу - Казанка шывĕ - Кремль сăрчĕн (ăна текстра Бығылтау тенĕ) икĕ енĕпе юхса выртать. Кремле хуларан уйăракан çырмана ку таранччченех Саин шăтăкĕ теççĕ. Хула картти çинче Акбикюль кӳлли çук ĕнтĕ, анчах та авалхи ал çырăвĕсенче тата Хусан хулин çул кĕнекисенче Хура кӳлĕпе юнашар Çутă кӳлĕ (хальхи Ленин сачĕ вырăнĕнче) пуррине те асăннă. Çапах та халĕ хула ячĕ урăхларах - Казань (Хусан).

Учель хулине авалхи вырăс летопиçĕсенче Ошель, Очел ятсемпе асăннă, анчах та каярах вăл кĕтмен çĕртенех çухалать. Ошеле Суздаль кнеçĕ Святослав 1220 çулта Пăлхара похода кайсан çунтарса янă тесе шутлаççĕ, унтанпа ăна юсаса çĕнетмен. Анчах та вăл ăçта вырнаçни çинчен тĕрĕс хыпарланисем пулман. Хăш-пĕрисем вăл Тетюши (Теччĕ), теприсем Камское Устье патĕнче вырнаçнă тесе шутлаççĕ. Гази-Барадж летопиçĕ ку ыйтусене те хурав парать.

**1219 çулта** балын бекĕ Бат-Аслап (Суздаль кнеçĕ Святослав кнеç) Учель патне 15 пин салтакпа ишсе пынă. Бурат патĕнче (хальхи Зеленодольск хули) унпа вырăнти арсен 20 пин çынран тăракан отрячĕ (вĕсем 1212 ç. хăйсен пăлхавне сĕмсĕррĕн пуçарнипе тарăхнă. Ун чухне курсыбайсем ислам йышăннă, хăйсене субашсемпе пĕр пек правасем пама ыйтнă хĕç-пăшалсăр 30 пине яхăн ара касса вĕлернĕ). Чи малтанах арсем Учель çывăхĕнчи Биш Балтуна тата Акбикюле çунтарса янă. Питĕ вăйлă пушар пулнă. Калган хули çывăхĕнчи тĕкмене вут хыпса илнĕ. Хулана хӳтĕлекенсем Саин шăтăкĕ патне куçнă та Югары Керменте пытаннă. Çак йывăр самантра хула патне Пăлхартан пулăшма янă курсыбай (ăна Газан сардар ертсе пынă) çитнĕ, вăл арсене тата вырăс çарĕсене çапса аркатнă. Çав çапăçура Бат-Аслап (Святослав) бекăн 6 пин çыннине вĕлернĕ, тепĕр çавăн чухлĕ çыннине тыткăна илнĕ. Çак çĕнтерӳ ячĕпе Чельбир патша 1220 çулта Учель хулинчен Газан туса хума хушнă. Вăхăт иртнĕ май унта пурăнакансем ăна Казань (Хусан) теме пуçланă. Ятне улăштарнă хыççăн Учеле (Ошеле) летопиçсенче текех асăнман.

**Гази-Барадж** илсе кăтартнă Хусан хулин çулĕ официаллă йĕркепе йышăннă версипе (1000 çул) пĕр килменнипе Хусанти историксем Гази Барадж пĕтĕмлетĕвĕсене авалхи вырăс летопиçĕсенче Хусан хулине никĕслени çинчен упранакан хыпарланисемпе танлаштарса тĕрĕсленĕ (уйрăммăн илсен, паллă мар авторăн «Казанская История» документчĕпе). Танлаштару кăтартăвĕсене интернетра www.jagear.narod.ru сайтра илсе кăтартнă. Вĕсем «Бахша Иманăн «Джагфар тарихы» пуххи Хусан хулине никĕслени çинчен пĕлтернĕ çул тĕрĕс пулнине çирĕплетеççĕ - 1103 çул.

**Летопиç** авторĕ (Гази Барадж) - Атăлçи Пăлхарăн юлашки канĕ - тата ăна монголсем çĕнсе илнĕ хыççăн Батыйăн пĕрремĕш эмирĕ (1236-1246) держава (пăлхарсем хăйсен çĕршывне çапла каланă) территорийĕнче 13-мĕш ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче пулса иртнĕ пулăмсене пурне те курнă. Çапăçусем уншăн ăнăçлах пулман, вăл çырас енĕпе ăста пулнă. Унăн ашшĕн (Пăлхар патшалăхĕн канĕ) питĕ пуян библиотека пулнă, унта Пăлхарăн чи лайăх писателĕсемпе поэчĕсен произведенийĕсене, авалхи летопиçсене пухнă. Вĕсемпе Гази ача чухнех паллашнă, хăйĕн летопиçĕнче те вĕсемпе усă курать. Нумай историк вăл çырнине ĕненмелле тесе шутлать. Çавăнпа та вăл Хусан тата Шупашкар крепоçĕсене йĕркелесе яни çинчен илсе кăтартнисене пĕр иккĕленмесĕрех йышăнмалла.

**Алексей НИКИФОРОВ,**
**Хусан хули («Хыпар»).**

**Çĕр ыйтăвĕ**

## ХАЛЬЛĔХЕ ВĂХĂТ ÇИТМЕН

*Хресчен (фермер) хуçалăхĕ йĕркелеме мана çĕр участокĕ ĕмĕрлĕхе панă. Çавна харпăрлăха тӳлевсĕр куçарма пулать-ши?*

**Т.ПЕТРОВ.**

**Акă епле уçăмлатать ку ыйтăва ЧР Пурлăх хутшăнăвĕсен тата çĕр ресурсĕсен министерствин пай пуçлăхĕ О.Александров:**

- Хресчен (фермер) хуçалăхĕ йĕркелемелли участока ял хуçалăх тĕллевĕллĕ категориллĕ çĕре уйăрса параççĕ. «Ял хуçалăх тĕллевĕллĕ çĕрĕн çаврăнăшĕ çинчен» федераци саккунĕнче ун пеккине приватизацилесси пирки çав çĕр вырнаçнă субьектри саккунта каланă вăхăтра çитессине палăртнă.

Министерство специалисчĕ пирĕн республикăра ун пек саккун, вăл ял хуçалăх тĕллевĕллĕ çĕр участокне приватизацилемелли вăхăт çинчен калакансkер, пуррине пĕлтерет. Унта палăртнă тапхăра 2008 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен кĕтмелле.

**В.ТИТОВА хатĕрленĕ.**

**Ыйтăр - хуравлатпăр**

## ЫТЛА ÇЫВĂХ ПУЛСАН КУÇАРТТАРМАЛЛА

***Пирĕн çуртран инçех мар çӳп-çап контейнерĕ ларать. Тепĕр чух унти тасамарлăх тăкăнать, çиллĕ çанталăкра пирĕн ума вĕçсе килет. Ăна аяккарах куçарма çук-ши? Ун пек тума явапписене мĕнле ӳкĕте кĕртмеле?***

**Т.СМИРНОВА.**

Территорисене тытса тăрасси пирки 1988 çулта ятарлă йĕрке йышăннă. Асăннă документра çӳп-çап контейнерĕсем пурăнмалли çуртсенчен, ачапăча учрежденийĕсенчен, спорт площадкисенчен мĕн чухлĕ аяккарах пулмалли пирки палăртнă. Ку инçĕш - 20 метр.

Çуллахи шăрăх вăхăтра çӳп-çап контейнерĕсене кунсерен пушатмалла, çанталăк 10 градусран сулхăнрах чухне - кун урлă. Ыйтнине пăхăнас пулсан, металран тунă хатĕрсене çуса тасатмалла, йывăçран пулсан ку кăна сахал: вĕсене дезинфекцилеме те тивет.

Уйрăм секторти контейнер пирки каласан, çӳп-çап вырăнне çурт хуçисем хăйсем палăртаççĕ. Капла чухне маларах асăннă инçĕш 8-10 метр таран пĕчĕкленме пултарать.

**«Советская Чувашия» хаçат тăрăх.**

## ТУЯНАКАН КĂМĂЛНЕ ТИВĔÇТЕРМЕСЕН

***Пĕр ялта пысăках мар суту-илӳ точки уçрăм. Унта куллен кирлĕ вак-тĕвек промышленность таварĕпе пĕрлех çи-пуç та сутатăп. Пĕринче çакăн пек пулса иртрĕ. Амăшĕ хĕрĕ валли виççе пăхмасăрах юбка туянчĕ. Эрне иртнĕ хыççăн вăл хайхи тавара йăтса килчĕ, юбка пысăкрах иккен. Манăн пĕчĕкрех виçелли пулмарĕ. Пысăккине пĕчĕклетме пулĕ-ха тесе тавара каялла йышăнмарăм. Юбка хуçи кăштахран мана суда пачĕ. Суд потребитель ыйтнине хам кăмăлпа тивĕçтермен тесе манран штраф шыраса илмелле турĕ. Саккунне пĕлсех каймастăп та, çавăнпа усă курмарĕç-ши тетĕп.***

**С.СИДОРОВА.**

Потребитель правине хăвăр кăмăлпа тивĕçтерменнишĕн штраф тӳлеттермелле туни тĕрĕсех. Штраф парасси маларах суд ирĕкĕ пулнă пулсан, халĕ вăл унăн тивĕçĕ шутланать. Суд апла тутăр тесен тавăç (иск) çыраканнин хăйĕн кăмăлне тивĕçтерме сутуçăран маларах ыйтнине ĕнентерсе памалла.

## ИНВАЛИД ПУЛСАН ТА ÇĂМĂЛЛĂХ ЛЕКМЕСТ

***Эпĕ инвалид шутланатăп та, 1995 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнче кăларнă «Раççей Федерацийĕнче инвалидсене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен» федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн манăн коммуналлă пулăшушăн çур хак тӳлеме ирĕк пур. Анчах çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пĕтĕм хака илесшĕн, çавна вăл эпĕ çурт-йĕрпе строительство кооперативĕн (ЖСК) çуртĕнче пурăннипе сăлтавлать. Пĕлесчĕ, хăшĕ йăнăшать: çурт-йĕрçĕсем-ши е эпех-ши?***

**Р.ФРАДКИН.**

Р.Фрадкин калакан саккунта, чăн та, патшалăх, муниципалитет тата обществăлла çурт-йĕр фондне тытса тăнишĕн тата юсанишĕн тӳлессипе инвалидсене 50 процентлă скидка пама пăхнă. Шел, анчах хальхи вăхăтри законодательствăра ЖСК çуртĕнче пурăнакансене валли ун пек çăмăллăх палăртса хăварман.

**Материалсене В.ЭВЕРККИ хатĕрленĕ.**

**Килти хуçалăх**

### ПУЛĂ ЮРАТАКАНСЕНЕ ПĔЛМЕ

***Тин тытнă пулă тасатиччен типме ĕлкĕрнĕ пулсан ăна темиçе минутлăха сивĕ шыва ямалла.***

***Пулăна алюмини савăтра пĕçерсен тути лайăхмарланать.***

***Пулă яшки йӳçек тутăллă ан пултăр тесен пулă сухине (жабра) тасатмалла.***

***Типĕтме çаксан шăна тапăнасран пулăна тип çупа апат уксусĕн хутăшĕпе йĕпетнĕ марльăпа витмелле.***

***Ăш-чикне тасатман пулăна типĕтес тесен ăна пуçĕпе аялалла çакмалла, апла тусан хырăмри тасамарлăх çăвартан юхса тухĕ.***

***Ăшаланă чух пулă сапаланса каясран ăна 10-15 минут маларах тăвар сапса хумалла, ăшаланă вăхăтра вара çатмана витмелле мар.***

***Ăшаланă чух çунса ан кайтăр тесен, пулăна хушăран çĕклесе илмелле, çавăрмалла - кун пек чух ун айĕнче вĕçĕмех çу пулĕ.***

***Пĕçернĕ пулă тутлăрах пултăр тесен тăварпа пăрăçа пиçес умĕн кăна сапмалла.***

***Пĕçернĕ чух пысăк пулăна сивĕ шыва ямалла, вĕтĕреххине - вĕрекеннине.***

***Ăшаланă чух япăх шăршă ан пултăр тесен, ăшалакан тип çăва çĕр улми касăкĕ ямалла.***

❂ Шкул хыпарĕ

## ХĔЛЕ ВАЛЛИ ВИТАМИН

«Хăрах уралла пиччен пин саплăк». Çак тупмалли юмаха Мăн Марка шкулĕнче вĕренекен 8-мĕш классем пĕрне-пĕри пачĕç.

Кăçалхи кĕр кунĕсем типĕ те ăшă килчĕç. Çакă ял ĕçченĕсемшĕн пысăк пулăшу пулчĕ. Ытарайми кунсемпе усă курса эпир те тăван уй-хире васкарăмăр.

Октябрь уйăхĕн 20-21-мĕшĕсенче Вениамин Михайлович Ильин арендатор патĕнче купăста касма шутларăмăр. Кăçал купăста питĕ тухăçлă пулнă: пуçĕсем шултра та йывăр. Виçĕ ушкăна пайланса эпир хĕрӳ ĕçе пикентĕмĕр. Кашниех хăйĕн ĕçне тĕплĕн, тирпейлĕ, тăрăшса туса пычĕ. Купăста касакансенчен уйрăмах Алина Максимовапа Александра Егорова палăрчĕç. Вĕсем хăвăрт та тĕрĕс касма пĕлнинчен пĕтĕм класс тĕлĕнсе тăчĕ.

Шултра та çирĕп пуçсене тиекенсем те кая юлмарĕç. Вĕсен ĕçри маттурлăхĕ пысăк шайра пулчĕ. Çак ĕçре уйрăмах Игорь Молодкин палăрчĕ: хăвăрт та вăйлă ĕçленипе кăна мар, ытти ачасене те йĕркелесе пынипе. Тулли тракторсене пушатса склада хуракансем патĕнче те ĕç вĕресе тăчĕ. Вениамин Михайлович ачасен ĕçченлĕхĕнчен тĕлĕнчĕ. Пирĕн тăрăшулăха пула 60 тонна купăста çĕр хуçи çăмăллăнах пуçтарса кĕртрĕ. Çак ĕçшĕн пире пин те ик çĕр тенкĕ пачĕ. Ку укçапа ачасем çитес кунсенче Шупашкара, Драма театрне, кайса курма шут тытрĕç. Тата витаминлă та усăллă купăста салачĕ хĕллехи сивĕ кунсенче те пирĕн сĕтел çинчен татăлмĕ.

**О.ГУРЬЯНОВА, класс ертӳçи.**

## АСĂРХАНĂР, УЛТАВÇĂСЕМ

Ултавçăсен серепине лексе шар курас марччĕ тесе хамăра, çывăх çынсене ялан асăрхаттаратпăр - сыхă пулас тетпĕр-çке.

Юлашки вăхăтра çын куççулĕ çинче пуяс шухăшлисем ытла та нумайланчĕç. Шупашкарта, акă, (пирĕн пата çитесси инçех мар) ватă çынсене хăйсене социаллă служба ĕçченĕсем тесе паллаштарса «Чувашия» санаторие йӳнĕ хакпа путевка сĕнекенсем тупăннă. Суммăн пĕр пайне вара маларах тӳлеме ыйтаççĕ. Пенси çулĕнчи çынсемпе вĕсем кăмăллăн калаçу пуçарса черете тăрса та «кĕтсе илеймен» путевкăна илме, çав вăхăтрах укçа перекетлеме, пултарни çинчен ĕнентерме тăрăшаççĕ. Медицина справки патне сыватăш çуртне каймалла мар-мĕн, тухтăр килех килет, теççĕ вĕсем. Çакăн йышши урăх сăмахсемпе те кăмăла çавăрма пултараççĕ çемçе чунлă мучисемпе кинемейсене ултавçăсем. Çавăнпа та сыхă та асăрхануллă пулăр, палламан çынсемпе калаçу ан пуçарăр, киле ан кĕртĕр.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

❂ Спорт

## ПУЛĂ ШӲРПИ ТЕ ПĔÇЕРЧĔÇ

Октябрĕн 21-мĕшĕнче район администрацийĕ Сывлăх кунне ирттерчĕ. Управлени тата уйрăмсен ертӳçисем, вĕсен специалисчĕсем унта активлă хутшăнчĕç. Администраци ĕçченĕсен чи юратнă спорт вăййисем - футболпа волейбол. Унпа вĕсем районти, республикăри ăмăртусене хутшăнса малти вырăнсене йышăннă. Хальхинче дартсра та вăй виççе пăхма шутларĕç. Культурăллă тата илĕртӳллĕ номерсемсĕр те пулмарĕ. Ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн специалисчĕсене пулă яшки пĕçерме шанчĕç.

Спорт уявĕнче кашнинех çĕнĕ ĕç эрни валлилĕх хавхаланупа çĕкленӳллĕ кăмăл çуралчĕ.

**Н.СТЕПАНОВА.**

❂ Ырă тĕслĕх

## ШОРККАРА ТА - СПОРТ ПЛОЩАДКИ

Ахальтен каламаççĕ - кашни çыннăн хăйĕн килĕнче хăйĕнех тирпей тытмалла. Çак каларăша тĕпе хурса Шорккасем, пуçлăхсем хушмасăр, вырсарни кун спорт площадки тума пуçларĕç. Малтан мини-футбол вылямалли лаптăка ăпăр-тапăртан тасатрĕç, кирпĕч купине тепĕр çĕре куçарса хучĕç.

Ĕçлекенсенчен Верăпа Валерий Виноградовсем, Светланăпа Григорий Долговсем, Людмила Платонова лайăх тăрăшрĕç. Шкул ачисенчен Артем, Света, Саша Александровсене палăртса хăвармалла. Вĕсене çак йĕркесен авторĕ кирпĕч купаланă çĕрте пулăшса пычĕ.

Çитес вăхăтра бульдозерпа çĕре якатмалла. Ĕмĕтре волейбол ăмăртăвĕсем ирттермелли тата ача-пăча вылямалли лаптăка хатĕрлесси.

**Н.ПЛАТОНОВ, район депутачĕ.**

## СПАРТАКИАДĂНА ХАТĔРЛЕНСЕ

Шкул ачисен районти Спартакиади вăй илсе пырать. Спортăн тăвата енĕпе çĕнтерӳçĕсене палăртрĕç ĕнтĕ. Кире пуканĕ йăтаканĕсен ăмăртăвне хатĕрленсе Кӳкеçри 1-мĕш вăтам шкулта турнир ирттрĕ.

Çамрăк спортсменсем çичĕ виçе категорийĕнче тупăшрĕç. Пуринчен те нумай очко пухаканни 60 килограмран çăмăлрах виçери Иван Климов пулчĕ. Ытти виçесенче Алексей Порфирьев, Павел Иванов, Алексей Петров, Андрей Швецов, Роман Черкашин тата Игорь Смирнов мала тухрĕç. Пурте вĕсем шкулти пурнăç хăрушсăрлăхĕн никĕсĕсен преподавателĕ И.В.Смоленцев патĕнче ăсталăх пухаççĕ.

**И.ВЛАДИМИРОВ.**

**На основании** распоряжений главы администрации Чебоксарского района от 27.10.2005 года № 003, 27.10.2005 года № 004, 28.10.2005 года № 005 администрацией Чебоксарского района **проводится открытый аукцион по продаже земельных участков,** который состоится **1 декабря 2005 года в 10-00** часов в зале заседаний администрации Чебоксарского района по адресу: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15.***

Организатором торгов выступает отдел экономики и управления имуществом администрации Чебоксарского района.

На аукцион выставлены следующие земельные участки:

участок № 1 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0113 (лот № 1),

участок № 2 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0114 (лот № 2),

участок № 3 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0115 (лот № 3),

участок № 4 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0116 (лот № 4),

участок № 5 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0118 (лот № 5),

участок № 6 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0119 (лот № 6),

участок № 7 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0120 (лот № 7),

участок № 8 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0121 (лот № 8),

участок № 9 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0122 (лот № 9),

участок № 10 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0123 (лот № 10),

участок № 11 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0124 (лот № 11),

участок № 12 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0125 (лот № 12),

участок № 13 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0126 (лот № 13).

Местоположение земельных участков: Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос.Кугеси, новый западный микрорайон.

Целевое назначение: индивидуальное жилищное строительство.

Начальная цена каждого земельного участка: 150000 рублей.

Сумма задатка: 30000 рублей.

Задаток установлен в размере 20% от начальной цены земельного участка.

Шаг аукциона - 5% от начальной цены земельного участка.

Для участия в аукционе претенденты должны представить в срок до 28 ноября 2005 года следующие документы: заявку; платежный документ, подтверждающий внесение задатка; физические лица предъявляют копию документа, удостоверяющего личность; юридические лица дополнительно предоставляют нотариально заверенные копии учредительных документов.

Организатор торгов имеет право отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за 3 дня до его проведения.

Определение участников торгов состоится 29 ноября 2005 года в администрации Чебоксарского района в 10-00 часов.

Выезд на место для проведения осмотра земельных участков состоится 9 ноября 2005 года в 10-00 часов.

Задаток перечисляется на счет: Финансовый отдел МФ ЧР в Чебоксарском районе (Администрация Чебоксарского района Чувашской Республики л/с 06303160016) р/с 40703810400003000001 РКЦ Кугеси пгт.Кугеси ИНН 2116820246 КПП 211601001 код 30330302030030000180.

Победителем аукциона признается участник торгов, предложивший наибольшую цену земельного участка.

Внесенный победителем торгов задаток засчитывается в оплату приобретаемого в собственность земельного участка

Договор купли-продажи подлежит заключению в срок не позднее 5 дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

Покупатель производит оплату земельного участка единовременно в течение 5 дней со дня подписания договора купли-продажи земельного участка.

Оплата расходов за публикацию информационного сообщения о проведении торгов по продаже земельных участков и об его результатах производится победителями аукциона.

Прием заявок, оформление документов для участия на торгах, ознакомление с проектом договора купли-продажи земельного участка, основанными на результатах инженерных изысканий параметрами разрешенного использования объекта капитального строительства и с техническими условиями подключения такого объекта к сетям инженерно-технического обеспечения, а также с платой за подключение осуществляются с 29 октября 2005 года по 28 ноября 2005 года до 17 часов в отделе экономики и управления имуществом администрации Чебоксарского района по адресу: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, каб.20. Телефон для справок 2-50-77.***

**Администрация** Чебоксарского района объявляет конкурс на замещение вакантной муниципальной должности муниципальной службы – ведущий специалист управления делами, организационно-контрольной и кадровой работы администрации Чебоксарского района.

Для участия в конкурсе необходимо представить в управление делами, организационно – контрольной и кадровой работы администрации Чебоксарского района следующие документы:

- заявление;
- личное дело, листок по учету кадров;
- фотографию;
- документ, удостоверяющий личность (по прибытии на конкурс);
- документы, подтверждающие необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию (выписку из трудовой книжки, копии документов об образовании, повышении квалификации, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы);
- медицинскую справку.

Заявление на участие в конкурсе принимаются ежедневно с $8^{00}$ до $17^{00}$ часов кроме субботы и воскресенья до 12 ноября 2005 года в кабинете №№ 6,7 администрации Чебоксарского района.

***Справки по телефону: 2-10-47, 2-16-91.***

*Украдены документы с сумкой ООО «Цивиль +» из легковой автомашины. Просим вернуть за вознаграждение. Обратиться по тел. 2-13-80 или в редакцию райгазеты «Тăван Ен».*

*4 пăрулана хурапа шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Мăн Пӳкасси ялĕ, Маркова Людмила Михайловна.*

Участники долевой собственности на землепользование СХПК им. И.Г.Кадыкова Чебоксарского района Чувашской Республики Иванов Александр Станиславович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Энгельса, д.10, Иванов Дмитрий Геннадьевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Советская, д.78, кв.17, сообщают о своем намерении выделить земельный участок в счет 5/944 доли в праве общей долевой собственности площадью до 163000 кв.м., на юге, юго-востоке 8-го поля первого полевого севооборота по ширине до 400 м и длине до 800 м, между оврагом южнее села Альгешево с восточной стороны, и землями КФХ «Волжанка-1», «Волжанка-2», «Ринас», «Овощи», «Руслан» с западной стороны.

Площадь образуемого земельного участка осуществляется в пределах кадастровой стоимости, установленной для сельскохозяйственных угодий, в границах которых образуется данный земельный участок.

Возражения прошу присылать в наш адрес и в адрес администрации Чебоксарского района не позднее месяца со дня публикации.

На основании общего собрания собственников земельных долей, состоявшегося 3 сентября 2005 года, выделяются в натуре в счет своих долей в поле № 2 площадью 6,09 га для передачи в аренду КФХ «РАК» Пушкин Ю.Я., Никитин Н.И., Пушкина А.Г. Выделяемые участки не превышают среднекадастровую оценку, поэтому компенсация не предусматривается. Претензии принимаются в течении месяца по телефону ***2-15-60.***

*Продаю шифер, цемент, рубероид, мох, керамблок, ДВП, оцинковка с доставкой (Ишлеи). Т.: 89033464340, 3-15-85.*

Скидка 5% ООО «ЗЕМЛЯ» МЕЖЕВАНИЕ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ г.Чебоксары, ул.Композиторов Воробьевых,10 (бывший ЗАГС) тел. 626-616

❂ ❂ ❂

Кугесьская поселковая администрация глубоко скорбит в связи с безвременной кончиной

**Юрия Гурьевича**
**БОРИСОВА,**

работавшего в 1994-2001 годах главой поселковой администрации и выражает искреннее соболезнование родным и близким покойного.

Шупашкар районĕнчи «Тăван Ен» хаçат редакцийĕн коллективĕ тĕп редактор çумĕн Алина Ардалионовна Сусметован аслашшĕ

**Василий Арсентьевич**
**СУСМЕТОВ**

ĕçпе вăрçă ветеранĕ, унсăр пуçне тата ват кукамăшĕ

**Ксения Михайловна**
**НИКИФОРОВА**

вилнĕ пирки ĕçтешĕпе пĕрле хурланнине пĕлтерет.

МПП «Чебоксаркагропромхимия» выражает глубокое соболезнование инженеру охраны труда Викторовой Раисе Васильевну в связи со смертью

**МАТЕРИ.**

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
РГУ “Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”, Министерства культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Приволжском окружном межрегиональном территориальном управлении МПТР РФ 17 декабря 2002 г. ПИ №18-1109

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем - 2-21-88, отдел общественно-политической жизни - 2-13-03, компьютерный отдел - 2-12-59, бухгалтерия - 2-13-80. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП “КуИД”. Тел./факс: (8240) 2-13-83. E-mail:print@chebs.cap.ru

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: В.Т.ИВАНОВА.

Печать офсетная. Объем 2,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 28.10.2005 г. в 16 час. 00 мин.
Заказ №1490 . Тираж 1685.
Индекс газеты - 54820.